**Демонстрационный вариант**
**контрольно-измерительного материала для**
**промежуточной аттестации в форме диктанта с грамматическим заданием в 8 классе**
**МБОУ «Старосаврушская ООШ» Аксубаевского муниципального района РТ**
**по родному (чувашскому) языку**

Сад ырлăхĕ

Вăрманта шултăра йывăççем тахçанах ешĕл тумне улăштарнă. Унта çав тери шăп. Çилсĕр çанталăкра тăп чарăнса тăрса итлесен сарăхнă çулçă вĕлтĕртетсе ўкнине те илтейĕн. Сад хăйĕн симĕс тумне хывсах хывман-ха: акаци, чие тĕмĕсем сип-симĕсех лараççĕ. Улмуççисем кăна чăл-чал чăпарланнă. Вĕсен çатрака турачĕсем шап-шурă шултăра улмасем пуснипе çĕрелле усăна-усăна аннă.

Лавр Кузьмич хăйĕн садĕнче антоновка çеç ўстерет. Пурлăха типтерлĕ тыткалакан пахчаçăн сĕтелĕ çинче хĕл варринче те улма татăлмасть. Кун таврăнса хĕвел çур еннелле сулăнсан Лавр Кузьмич пасара çур кило таякан шултăра, тутлă, кĕрпеклĕ улма ешчĕкĕ-ешчĕкĕпе кăларать. Майрасем ун улмине, пĕр- пĕринпе çапăçса тенĕ пекех, ăмăртмалла туянаççĕ.

– Лайăх пулнă çул кашни улмуççирен вун пилĕкшер пăт туса илетĕп. Ун чухлĕ çимĕçе ăçта чикес. Ачам-пăчам çук, арăмпа иксĕмĕре нумай кирлĕ мар, – тет вăл.

– Ытлашшине сутатăп вара, кăларса тăкаймăн ĕнтĕ пухнă ырлăха. Çынсем пек таçта инçене кайса çўреместĕп эпĕ, усламшăн çунмастăп, хам садра аппаланнă хакне тавăрсан та çитет мана. (150 сăм.) (А.Арт.)

1. *1-мĕш предложение синтаксис тишкерĕвĕ тумалла.*
2. *1-мĕш абзацран «глагол+глагол» сăмах майлашăвĕсем çырса илмелле, тĕп сăмахне тата ыйтăвне палăртмалла.*
3. *Текстран пĕр йышши членлă предложение çырса илсе мĕнле член пулнине туртса палăртмалла.*

**8. Ключи к заданиям**

1. Вăрманта шултăра йывăççем тахçанах ешĕл тумне улăштарнă. – хутсăр, тулли, икĕ тĕп членлă, анлă, калуллă, кăшкăруллă мар.

2. Чарăнса тăр (мĕнле?), вĕлтĕртетсе ўк (мĕнле?), усăна-усăна ан (мĕнле?).

3. Кун таврăнса хĕвел çур еннелле сулăнсан Лавр Кузьмич пасара çур кило таякан шултăра, тутлă, кĕрпеклĕ улма ешчĕкĕ- ешчĕкĕпе кăларать.